# ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕНЕ ПАТШАЛĂХ УКÇА ХУШСА ПАРАТЬ

РАÇÇЕЙ правительстви вĕрентӳ енĕпе калăпăшлă наци проектне пурнăçа кĕртме тытăнни çинчен плетпĕр ĕнтĕ. Унпа килĕшӳллĕн шкула çĕнетес, вĕрентӳ пахалăхне тивĕçлĕ шая çĕклес ĕçре тĕп вăй пулса тăракан педагогсен пурнăç тата ĕç условийĕсене лайăхлатмалли мерăсем палăртнă. Тĕпрен илсен, сăмах çулталăкра пĕрре паракан грантсем пирки пырать. Камсем тивĕç вĕсене? Пирĕн республикăна миçе грант параççĕ? Çакăн пирки ЧР вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Г.П.Чернова ятарлă пресс-конференцире каласа пачĕ.

– Патшалăхăн грант пулăшăвне уйрăм педагогсене тата уйрăм шкулсене кăна мар, наукăра ĕçлекен, творчествăра палăрнă çамрăксене, вĕренекенсене пама палăртнă. Ку пире уйрăмах савăнтарать. Чăваш Енре темиçе çул ĕнтĕ творчествăра активлă çамрăксене хавахлантармалли тĕрлĕ формăпа усă кураççĕ. Çавăнпа та ку ыйтупа федераципе пĕр çул-йĕр тытса пыни кăмăллă, – тет Галина Петровна. – Çак енĕпе кăна та мар. Сăмах май, ЮНЕСКО кашни çулах этемĕн ăс-хакăл хăвачĕн хаклавне ирттерет. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш Ене Мускавпа тата Санкт-Петербургпа пĕрле чи пĕрремĕш ушкăна кĕртнĕ. Ку Чăваш Енре вĕрентӳ аталанăвĕн хăш-пĕр пĕтĕмлетĕвĕсем çакăн пек çӳллĕ шайра та палăрма пултарнине кăтартса парать.

– Пирĕн республикăри педагогсем валли миçе грант уйăрасси паллă-и?

– Ас тăватăр пулĕ-ха, федераци шайĕнче уйрăм цифрăсем, суммăсем пĕлтернĕччĕ. Ку ыйту пире питĕ интереслентерет. Раççей Вĕрентӳ министерстви хăш-пĕр квотăсене палăртнă. Анчах хальлĕхе пĕтĕмпех официаллă мар йĕркепе, нихăш цифрăна та документсемпе çирĕплетмен-ха. Çапах та вĕсемпе паллаштарма юрать пулĕ. Тĕслĕхрен, хулари 2 пин шкул ачи пуçне – 1 учителе, ялти 1 пин ача пуçне 1 учителе патшалăх пулăшăвĕ тивĕçмелле. Шкулсен хисепне мар, вĕренекенсен йышне шута илни питĕ тĕрĕс тесе шутлатăп. Шкулсем тĕрлĕрен-çке. Пирĕн республикăра 100 шкула яхăн сахалланчĕ. Анчах ачасен шучĕ ун чухлĕ чакман, эпир вĕсене ресурс центрĕсене пухрăмăр кăна. Шухăшласа пăхрăмăр та, çак йĕркене пăхăнсан пирĕн республикăра 100 пин тенкĕлĕх гранта 100 яхăн учитель тивĕçмелле.

– Вĕсене мĕнле критерисем тăрăх суйласа илетĕр?

– Лару-тăрăва малтанхи çулах кăткăслатасран федераци палăртнă йĕркене пăхăнсан аванрах пулĕ тетпĕр. Паллах, тĕп задача – ыйтăва май килнĕ таран объективлăрах татса пама тăрăшасси. Ку ĕç – çăмăл мар. Учитель ĕçне метр-тоннăпа, çеккунтпа виçме çук. Яланах мĕнле те пулин субъективлă элемент тупăнма пултарать. Тĕпрен илсен, хаклавăн тĕп критерийĕсем – инноваци проекчĕсене активлă хутшăнни, çĕнĕ вĕрентӳ технологийĕсемпе усă курни, çак ĕçĕн витĕмĕ пурри: вĕренекенсем предмет олимпиадисенче кăна мар, спорт, ӳнер, общество лидерĕсен тĕрлĕ шайри конкурсĕсенче малти вырăнсене йышăнни. Пĕтĕмпех усăллă пулма пултарать. Çавăнпа та кашни учителĕн, вĕренекенĕн хăйĕн ӳсĕмĕсене çирĕплетекен портофилио пухни питĕ вырăнлă.

– Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕн кăтартăвĕсене шута илеççĕ-и?

– Пĕлтерĕшлĕ шайрах шута илместпĕр пуль тетĕп. “Иккĕсен” хисепĕ вара хушма хаклав пулма пултарать. Енчен те учитель патшалăх программине те “виççĕлĕх” вĕрентеймест пулсан, “иккĕ” нумай-тăк, унăн конкурса хутшăнма заявка тăратмалла та мар. Учителĕн ĕçне хакланă чухне тата вăл хăйĕн опытне мĕнле сарнине, экспериментсене, сăнавсене, педконкурссене хутшăннине, професси кăларăмĕсенче статьясем пичетленине шута илетпĕр. “Чи лайăх сайт” республика конкурсĕнче кирек хăш предмета вĕрентекен учитель те хăйне кăтартма пултарать. Хальхи учительшĕн компьютерпа ĕçлеме пĕлнипе пĕрлех унпа вĕрентӳре, хăйĕн аталанăвĕнче тухăçлă усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл ачасене питĕ нумай параять. Çак ыйтăва уйрăмах тимлĕ пăхса тухăпăр.

– Уйрăм шкулсене паракан грантсем пирки мĕн калама пултаратăр?

– Юлашки 5 çулта шкулсен пурлăх-техника никĕсне çирĕплетме, строительствăна шутламасăр, 70 яхăн миллион тенкĕ хыврăмăр. Çапах та шкулсенче оборудовани çитмест. Грантсем пама йышăнни питĕ вырăнлă пулчĕ. Пире миçе грант тивĕçесси хальлĕхе паллă мар-ха. 30-тан кая пулас çук тесе шутлатпăр. Кунта территори принципĕ сыхланса юласси иккĕленӳллĕ, шкулсен хисепне шута илеççĕ пулас. Хăшĕсене суйласа илесси çӳлте асăннă критерисемпех çыхăннă: инноваци программисемпе ĕçлесе лайăх кăтартусемпе палăрни, шкула ертсе пыма обществăна, тĕслĕхрен, попечительсен канашне тухăçлă хутшăнтарни. Паллах, вĕрентӳ пахалăхĕ çӳллĕ шайра пулни. Шкул ачасене вĕренӳ вăхăтĕнче пурнăç çулне тупма пулăшни, аттестат илнĕ хыççăн вĕсенчен пĕри те “урамра” юлманни. Шкулта пухнă опыта сарни, районти, хулари, республикăри шкулсен хушшинче пĕр-пĕр енĕпе лидер пулни... Çаксем пурте грант илмелли конкурсра пулăшма пултараççĕ.

Аса илтеретĕп, пирĕн министерствăпа федераци министерствин пĕрлехи проекчĕ тăрăх республикăри 51 шкула темиçе миллион тенкĕлĕх оборудованипе тивĕçтертĕмĕр. Паллах, вĕсен кăтартăвĕсем чылай лайăхрах. Çакна шута илсе, тен, вĕсене конкурса кĕртмĕпĕр те. Мĕншĕн тесен вĕсен условийĕсем ыттисенчен лайăхрах. Грантсене валеçме общество организацийĕсене те хутшăнтарнă май çак ыйтăва вĕсемпе канашласа татса парăпăр.

– Класшăн яваплă педагога хушса тӳлес тĕлĕшпе те çĕнĕлĕхсем палăртнă...

– Ку йышăну кăмăла ытларах та çĕклет. Федераци класс ертӳçин ĕçне уйăрса хаклани – пĕлтерĕшлĕ утăм... Мĕншĕн тесен вăл – шкулти тĕп воспитатель, хăйĕн ĕç тивĕçĕпе ашшĕ-амăшне ачисене воспитани пама пулăшмалли çын. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, республикăра класшăн яваплă педагога питĕ сахал – 60-150 тенкĕ хушса тӳлеççĕ. Кашни шкул ăна хăй палăртать. Çак укçапа ĕçлекен класс ертӳçинчен пысăк яваплăх кĕтме йывăр. Халĕ вара çак лару-тăру улшăнать. Класра 25 ачаран ытларах пулсан – 1000 тенкĕ тӳлеççĕ. Сахалрах-тăк – тӳлев пĕчĕкрех пулать. Çакна тĕрĕс тесе шутлатăп. Класс ертӳçин кашни вĕренекенпе ĕçлемелле, вăхăт та, яваплăх та ытларах кирлĕ. Паян ĕç укçине палăртакан комисси ĕçлет. Енчен асăннинчен те пысăкрах классем пулсан кунта, тен, тата ытларах тӳлемелле.

– Республика Президенчĕн Указĕпе хамăрăн премисем те пулаççĕ. Вĕсене камсем илĕç?

– Республика Президенчĕ Н.В.Федоров вĕрентĕве аталантарас ĕçе пысăк витĕм кӳрет. Унăн Указĕсемпе килĕшӳллĕн пултаруллă учительсем, студентсем, вĕренекенсем темиçе çул ĕнтĕ Президент премийĕсене илеççĕ. Халь, акă, шкулсемпе учительсене пулăшма çĕнĕ премисем пама йышăнчĕ. Çак тĕллевпе çĕнĕ çултан 4,5 миллион тенкĕ тăкаклама палăртнă. 30 шкула 200-шер пин тенкĕ, 30 учителе – 10-шар пин тенкĕ тивĕçет. Вĕсене Раççей гранчĕсен конкурсне хутшăннă, анчах çĕнтереймен шкулсемпе учительсенчен суйласа илетпĕр. Ман шутпа, вырăнта та, районсен, хуласен, ялсен администрацийĕсен учительсене хавхалантарма хăйсен премийĕсене йĕркелемелле.

– Ытти педагогсен ĕç укçине ӳстерес ыйтупа лару-тăру мĕнлерех?

– Федераци палăртнă ӳсĕмсене эпир йăлтах пурнăçласа пыратпăр. Çитес çулхи çуркунне педагогсен ĕç укçи каллех ӳсмелле. Анчах ку ыйтăва туллин татса параймасть. Паян пурне те танлаштарса тӳлени тивĕçтермест. Халĕ ку проблемăна, малашне мĕнлерех пулмаллине ĕç ушкăнĕ профсоюзпа сӳтсе явать. Малашне пĕр пеклĕх пĕтмелле. Ĕç укçине вĕрентӳ пахалăхне, кăтартăвне, учителĕн категорине кура ӳстерме пуçлаççĕ. Лайăх ĕçлетĕн – ытларах илетĕн, япăх пулсан – сахалрах.

– Кăçалтан категори илмелли аттестацие çĕнĕ йĕркепе ирттереççĕ иккен. Учительсене çак хыпар шиклентерет, калаçтарать. Тĕрĕслев çав териех кăткăсланнă-и?

– Аттестаци чӳк уйăхĕн 18-28-мĕшĕсенче иртет. Вăл “Педагогика тата ертӳçĕ кадрĕсене аттестацилемелли çĕнĕ формăсемпе процедурăсем” ятлă документпа килĕшӳллĕн пулать. Республикăра 15540 учитель, çулсерен 10 процентчĕ категори илмелли аттестацие хутшăнать. Вĕсем хăйсен разрячĕсене çирĕплетеççĕ, е çĕнĕ разряда куçаççĕ. Разрядсен хушшинчи уйрăмлăх – 500 тенкĕ. Мĕншĕн эпир кăçал эксперимент шучĕпе аттестацин çĕнĕ формине тĕрĕслесе пăхас терĕмĕр-ха? Ку йышăну вĕрентĕвĕн наци проекчĕ кăларса тăратнă çĕнетӳ ыйтăвĕсемпе çыхăннине палăртмалла. Ĕçшĕн çĕнĕлле тӳлесси çине куçма хатĕрленетпĕр пулсан учительрен те çирĕпрех ыйтма тивет. Унăн хăйĕн те ӳсмелле, вĕрентӳре лайăх кăтартусем патне çитмелле. Вăл çакна тивĕçтернине тĕрĕслеме çĕнĕ меслетсемпе усă куратпăр та ĕнтĕ. Сăмах май, малашне ĕçшĕн тӳленĕ чухне разрядсем, категорисем хушшинчи уйрăмлăх питĕ пысăк пулмалла. Тĕслĕхрен, аслă категорири учителĕн ĕç укçи категорисĕр вĕрентекенĕннинчен темиçе хут пысăкрах пулĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăйĕн статусĕпе чи пысăк шайри учитель пулнине кăтартса парать.

Иккĕмĕш сăлтав – учителе çĕнĕ технологисене алла илме хавхалантарасси. Аттестацин пĕрремĕш тапхăрĕнче компьютер экзаменĕ, хăйне евĕр ППЭ, тытаççĕ. Малтан инструктаж ирттеретпĕр. 25 ыйту предметпа, 5-шер ыйту педагогикăпа, психологипе, валеологипе пулаççĕ. Тестсене хуравласа 100 балл таран пухма пулать. Халиччен кун пек экзамен пулманнине кура çăмăллăх парас терĕмĕр. Аслă категори валли ун витĕр тухмаллах. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш категори илес текенсен

вара унта хутшӑнмасан та юрать. Ку – кӑҫаллӑха кӑна. Ҫитес ҫултан аттестацин ҫӗнӗ форми пӗтӗмӗшле ӗҫе кӗрет. Иккӗмӗш тапхӑрта учителӗн педагогика проектне хӳтӗлемелле е хӑйӗн тата вӗренекенӗсен ҫитӗнӗвӗсен пуххипе паллаштармалла. Виҫҫӗмӗш тапхӑр улшӑнман, эксперт ушкӑнӗсем уроксене, тӗрлӗ мероприятие ҫитсе кураҫҫӗ, хаклаҫҫӗ.

Кӑрлачӑн 1-мӗшӗнчен вӗрентӳ учрежденийӗсене ҫӗнӗ формӑпа аттестацилеме тытӑнатпӑр. Халӗ документсене хатӗрлес ӗҫ пырать.

Алина ЛУКИЯНОВА.